К С(Чув)
Ю41
23048-чув

Геннадий Юмарт

# Керменкке



кор
С (Чув)
К
Ю41

Геннадий Юмарт



# КЕРМЕНККЕ

Кӗнекене
М. А. Ильин художник
илемлетнӗ

Чӑваш кӗнеке издательстви
Шупашкар — 1979



## Пĕчĕк туратна памăн-ши мана?

Лăпсака йăмра
Сар кăчăкăра.
Уншăн сар хĕвел—
Имлĕхлĕ эмел.
Ĕнтĕ иртенпе
Пинĕ-пинĕпе
Ылтăн хурт сĕрлет,
Пыл шăрши кĕрет.
Чĕлтĕр çулçăсем—
Вĕлтĕр çунатсем
Хускалмаççĕ-ха,
Сас тумаççĕ-ха.

Çамрăкрах турат
Симĕсрех тăрать.
Эй, йăмра, йăмра!
Темшĕн чунăмра
Кĕвĕ вăранать,
Кĕвĕ шăранать.
Ман шăхличĕпе
Шăнкăрч сассипе
Шăхăртас килет,
Сас парас килет.
Пĕчĕк туратна
Памăн-ши мана?



23048-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# Кайӑксем мӗншӗн тӗрлӗ тӗслӗ



Асанне мана калать:
Кураксем каяҫҫӗ, тет,
Хура тинӗс леш енне,
Тӳсеймеҫҫӗ хӗл кунне...
Хура тинӗс шывӗпе
Чӳхенеҫҫӗ пуль вара,
Ҫавӑнпа та тӗсӗпе
Йӑмӑх пурҫӑн пек хура.



Асанне мана калать:
Сарӑкайӑк пӗчӗк, тет,
Ытарми чӗлхеллӗскер,
Сарӑ-сарӑ тӗслӗскер...
Сарӑ тинӗс шывӗпе
Чӳхенсе вӑл илнӗ-тӗр,
Сар лимонӑн тӗсӗпе
Сӑрланса вӑл килнӗ-тӗр.

Чи-чи! тесе тем калать,
Кӑсӑя тус чилетет
Ҫӳллӗ-ҫӳллӗ туратра,
Сарӑ, симӗс хӑй, хура..
Виҫӗ тинӗс шывӗпе
Чӳхенсе ҫӳренӗ-тӗр,
Ҫавӑнпа та виҫ тӗспе
Вӑл вара пӗвеннӗ-тӗр.





## Ҫăлтăрсен вăййи

Вăхăт ҫитрĕ кĕме—
Тĕлĕкре ҫӳреме.
Йăлтăрти ҫăлтăрсем,
Чăлтăрти ҫăлтăрсем,
Чăл та чал ҫуталса,
Чĕлтĕр-чĕлтĕр кулса,
Йыхăратăр пире
Инҫетри тӳпере.
Сирĕн вăййăр иккен
Питĕ савăк, ĕлккен:
Пытанатăр самант,
Тупăнатăр самант.
Ав, тепри юнашар
Ярăнайрĕ йăр-яр!—
Чăмрĕ-шим ҫырмана?—
Курăнмасть вăл мана...
Йăлтăрти ҫăлтăрсем,
Чăлтăрти ҫăлтăрсем!
Ҫĕкленесчĕ ҫӳле—
Кĕмелле-ҫке киле.

# Кăчăрми

Кăчăр-кăчăр кăчăрми,
Ан чăрмала чарăнми—
Эс пӳрте кěресшěн,
Ашкăнса çӳресшěн.

Хуп-хура та çăмламас,
Лутрашка, хырăмламас,
Эс тăмана пуçлă,
Пысăк хăрах куçлă.

Пурăн эсě çырмарах,
Шапапа пěр йăварах:
Иксěр туслă пулăр,
Тăм йăвалăр, выльăр.

Çинçешке урусемпе
Ăмăртса эс чуп çилпе
Çуйăхаш та хыттăн,
Пăлтăр-палтăр ыткăн.

Кăчăр-кăчăр кăчăрми,
Ан чăрмала чарăнми:
Эп сана кěтменччě,
Хăнана чěнменччě.

Алăк уçăлчě те ак—
Сикрě кěчě пěр кушак.
Ах, кушак, хăратрăн—
Сехрене хăпартрăн.





# Пакша

Эй, тамаша!
Йăрă тусăмçăм пакша,
Эс ăçта çӳрен,
Мĕншĕн кĕттерен?—
Вăйăм пĕтрĕ юр ашса.

Çăмламас хӳре!
Ма чĕнместĕн Атнере?
Е чирлерĕн-и,
Е писейрĕн-и,
Е çӳретĕн инçетре?

Пурччĕ сан валли,
Тусăмçăм, сăйлаҥмалли!
Эс ăна ялан
Хапăл пулакан—
Акă мăйăр сан валли!..

Манăн йыхрава
Илтеймерĕн çав-çавах.
Уттарам киле
Килнĕ йĕрпеле.
Курăн мăйăрне хăвах...

Ак тамаша!
Сисеймен эп, апăрша:
Эс вăрман хĕрне,
Манăн çул çине,
Тухнă ларнă-мĕн, пакша!

Ай маттур иккен:
Йăлт та ялт инçе сикен!
Юрĕ тарăнран,
Тунсăхланăран
Хирĕç тухнă эс пĕччен.

## Уйăхпи валли

Кил-ха, асанне,
Манăн вăйă кĕтесне.
Пĕчĕкрех кравать
Пĕр енне лартма юрать.
Парăпăр ăна
Уйăхпи-хĕрачана.
Уйăх мĕскĕне
Илнĕ. теттĕн хăй патне.
Тăлăхскер хальччен
Йăлăхрĕ пуль пĕр-пĕччен.
Кайрĕ пуль шăнса,
Куртăрччĕ вăл ăшăнса.
Пултăр вăл аппа,
Выльăттăм вара унпа.
Çыр-ха, асанне,
Космонавт пичче патне:
Кайтăр карăппа,
Таврăнтăр хĕрачапа.



# Кулăшла йăран

Петĕрккепе Хветĕркке
Ахăлтатма чĕрĕ-çке.
Кулă чирĕ лекнĕрен
Тертленеççĕ кунсерен.
Ақă йăран чавмалла,
Пахчаçимĕç акмалла.
Кĕреçене илсенех
Чир аптратрĕ вĕсене:
Қаçса кайса култарать,
Ĕçлеме чăрмантарать.
Пурпĕр сапрĕç шĕвĕрсем
Тĕрлĕ çимĕç вăррисем.
Шăтрĕ тухрĕ темĕн те,
Палласа илеймĕн те:
Кишĕр теес—укроп пек,
Укроп теес—курăк пек;
Пур пăрçаллă вĕлтĕрен,
Хĕрлĕ мăкăньлĕ пиçен;
Пур суханлă сар кăшман...
Мĕн кăна шăтса тухман!



# Ярӑнтарӑттӑм сире

Кач-кач качака,
Мӑйраки ун катрака.
Унӑн ик мӑйракинчен
Икӗ кукӑль ҫакрӑм.
Качакине чи мала,
Виҫӗ йытта хыҫала
Кӳлтӗм те вӗренпелен,
Пушшине шарт! ҫапрӑм.
Вирхӗнейрӗҫ хайхисем.
Тутлӑ ҫимӗҫшӗн вӗсем
Талпӑнаҫҫӗ хамлатса—
Канӑҫ ҫук виҫ йыттӑн.

Вӗсенчен хӑрарӗ те,
Хӳрине тӑратрӗ те
Качака, тӑрс-тӑрс! тапса,
Мекекек! тет хыттӑн.
Мекекек те хам-хам-хам!
Юрласа пыратӑп хам.
Сисеймерӗм—пасара
Ҫитрӗмӗр хавассӑн...
Килӗр, тусӑмсем, часрах!
Ҫунашкам ҫине лартса
Ярӑнтарӑп хӑвӑра,
Кӑмӑлӑр пулсассӑн.





## Улăп евĕрлĕ пуласчĕ

Улăп, Улăп, теççĕ,
Улăп вăйлă пулнă, теççĕ.
Уйăха та хĕвеле
Вăл хăпартнă, тет, çӳле—
Çĕмрĕлсе ан кайччăр,
Тĕнчене курнайччăр.
Улăп евĕрлĕ пуласчĕ,
Ырă ĕç тăвасчĕ.

Улăп, Улăп, теççĕ,
Улăп паттăр пулнă, теççĕ.
Тĕрлĕрен тăшмансене
Вăл кĕртмен тăван çĕрне—
Чăл та пар тустарнă,
Вăр-хурахĕ тарнă.
Улăп евĕрлĕ пуласчĕ,
Паттăр ĕç тăвасчĕ.



# Керменкке

Кантăк пек яка çулпа
Сăпка пек автобуспа,
Хир-вăрман кура-кура,
Çитрĕм шур Шупашкара.
Çÿллĕ-çÿллĕ çурчĕсем,
Çап-çутах чÿречисем.
Урамсем тăршши—çăка,
Сунчăк евĕр, лăпсака.
Тимĕр карлăклă кĕпер
Чĕнтĕрленĕ пек чипер.
Кĕтĕм кайрăм пĕр çуртне—
Аслă ывăл хваттерне.
Алăк уçрĕç туххăмра:
Салампи тăрать умра—
Каçăркка сăмсаллăскер,
Мăйрака çивĕтлĕскер.
Уртăнать мăнук мăйран,
Ыталать мĕнпур вăйран.
Чанкăл-чанкăл-чанкăлти
Чарăнми пуплет тути...
Шерпетпе хăналасан,
Калаçса ларкаласан,
Чĕнчĕ вăл аслашшĕне
Хăйĕн вăйă кĕтесне.

Пĕр чÿрече патĕнче
Хÿшĕ пекскер—ак тĕнче!
Хыçлă пукан хыçĕнчен,
Хыçне лартса ку енчен,
Кантрапа кăкарнă та,
Капăр тутăр карнă та
Пĕр тăваткăл пÿлнĕ-мĕн.
Алăк та пур пÿлĕмĕн:
Чÿреченĕн чаршавне
Икĕ вĕçне ик енне
Карлăк урлă янă та—
Алăкĕ ун янтă та!
Унăн шĕвĕр тăррине
Юр пек шурă хут çине
Тунă тухнă чечексем,
Çăлтăр евĕрлĕ хăйсем.
Чечек-мечек картине
Шăп та шаях варрине
Çырнă хунă сăвăлла,
Сăвăлла та чăвашла:
«Килĕр, килĕр хăнана,
Эпĕ хапăл яланах!
Юрататăп выляма,
Юрлама та ташлама.



Йыхӑрать Нарспи сире,
Вӑл кӗтет керменккере».
— Ку мӗнле Нарспи тата?
Керменкки вара ӑҫта?
— Эс мӗскерле, асатте,—
Курмастӑн-им нимӗн те?—
Тет мӑнукӑм ӳпкелет.
Вӑл хайхи хӳшше тӗллет:
— Ку пулать, ак, керменкки—
Юмахри кермен пекки.
Керменккере чиперкке,
Хай Нарспи текен хӗркке...—
Пӑхрӑм та алӑкӗнчен—
Чӑн, кермен пекех иккен:
Янкӑр ҫутӑ чӳрече,
Чечексем—чӳлмек ҫинче.
Тавралла—хитре пукан:
Кил, тархасшӑн,—лар та кан.
Виҫ-тӑватӑ пукане
Ларнӑ тухнӑ пӗр енне.
Сӗтелли тулли ҫиме—
Ан вӑтан пырса илме:
Ҫырлапа улма, шерпет,
Сарӑ мӑйӑр илӗртет.
Темӗн чул тетте тӑрать—
Куҫӑм-пуҫӑм алчӑрать.
— Кураймарӑм-ха кунта:
Ӑҫтарах Нарспи тата?—
Тетӗп эп, ун-кун пӑхса.
Саламӑпийӗм васкаса:
— Лар-ха,—тет,—пукан ҫине.—
Хӑй тытать пӗр пукане:
— Ак Нарспи. Эс кур-ха, кур:

Пуҫӗнче тухйи те пур,
Тӗрӗленӗ кӗпине,
Ҫакнӑ янӑ шӑрҫине.
Ыттисем—ун тусӗсем,
Хӑнара паян вӗсем.
Йӑлтӑрти пуҫкӑшӑльпе,
Вӑрӑм-вӑрӑм кӗпипе
Килнӗ ҫитнӗ аякран,
Аякран та Мускавран
Вырӑс хӗрӗ, ыр пике—
Василиса чиперкке.
Йӗкӗчӗ пулать грузин,
Кӑнтӑртан вӑл, йӑрӑс ҫын.
Тӗрӗллӗ калпакпала,
Хӗрлӗ шӑлаварпала—
Вӑл пулать тутар пики,
Пит ҫемҫе ун пушмакки.
Сахал мар Нарспин туссем,
Килеймен кунта хӑшсем...
— Кам туяннӑ кусене?
— Парнеленӗччӗ анне.
Тум-юмне ҫӗлерӗм хам—
Пулӑшман мана никам.
— Ай ӑста иккен те эс!
Юмахри пек ку кӗтес...
— Асатте, эс кур-ха, кур:
Ташлама вӗсем маттур,—
Тет мӑнукӑм кӑмӑлтан.
Нарспие илет малтан,
Тытӑнать кӗвӗлеме,
Ташлаттарса ҫӳреме:
Линкка-линкка кӗввипе
Шутарать пушмакӗпе,
Аллине те султарать,
Пӗр вырӑнта ҫаврӑнать.
Ак тухать Мускав пики:
Ҫӳл кӗлеллӗ пушмакки
Шӑкӑрт-шӑкӑрт! тутарать,
Пӗр ҫӗрте тапса тӑрать.

Грузина черет çитет:
Тухнă майăн ялт сикет,
Вĕттĕн-вĕттĕн вăл утать,
Чĕвен тăчĕ те—чупать,
Ăмăрткайăк вĕçнĕ пек,
Çĕкленсе çӳрет вăл тек.
Тухрĕ ак тутар пики,
Килĕшет утти-сикки:

Тайăлать енчен енне—
Тĕрлĕрен ĕç тунине
Аллипеле кăтартать,
Тĕк пек çăмăллăн утать...
Курасах килет пулсан,
Хушăран ерçӳ тупсан,
Çитĕр шур Шупашкара,
Юлмĕ кăмăлăр вара.



## Çиçтепи

(Юмах)

Сар хĕвелĕн çутинче
Йăлтăртатать çут тĕнче.
Ешĕл хир, чăпар çаран,
Лăс вăрман-и хушăран—

Çиçкĕнет, ем-ешĕлскер,
Çумăрпа чӳхеннĕскер.
Шăлтăр-шăлтăр урапа
Шăнкăр-шăнкăр шăнкравпа,—

Те туйран, те пасартан,—
Вĕçтерсе килет таçтан.
Ултă-çичĕ пукане
Ларнă тухнă ун çине.
Юррине шăрантарса,
Таврана янраттарса,
Чуптараççĕ çулпала
Тăвалла-анаталла.
Лавçă çапрĕ лашана,
Лешĕ карт туртать кăна—
Ўкрĕ юлчĕ çул çине
Хыçалти пĕр пукане.
Лав инçе кайса пырать,
Ку чупать, ку кăшкăрать:
— Чарăнăр-ха, аппасем!..
Çаврăнăр-ха, аппасем!..—
Шăлтăр-шăлтăр урапа,
Шăнкăр-шăнкăр шăнкравпа
Хытăрах шăлтăртатса,
Хытăрах шăнкăртатса,
Пытанать сăрт хыçĕнче,
Ку юлать хир уççинче.
Пусĕнче тухъя иккен,
Мăйĕнче мăя иккен:
Шăнкăр-шăнкăр—тенкисем,
Йăлтăр-йăлтăр—шăрçисем.
Хăй чипер чиперрине,
Темшĕн каçăртнă пуçне.
Акă тухрĕ çул юппи,
Çиçтепишĕн—ăш хыппи:
Ăçталла халь утмалла,
Ăçталла çул тытмалла?
Вăхăта ямасть сая—
Сулăнать сулахая.
Пĕр курак иртсе пырать,
Хурама çине ларать:

— Çиçтепи тус, ăçталла
Çул тытатăн каплалла?—
Пўрнеске пек пукане
Хуравлать ак хайхине:
— Ўкрĕм юлтăм лав çинчен.
Кăшкăрсан та темĕнччен,
Илтеймерĕç сассăма,
Пĕлейместĕп ним тума.
— Ан кулян-ха, пукане,—
Тет куракĕ пикене.—
Эс, эппин, качча тухсам,
Каччă терĕш хам пулам.
— Еплерех ташлан, юрлан?
Мĕн çиен, ăçта пурнан?—
Тет пике хай йĕкĕте.
Леш, анса, яка çĕрте
Урлă-пирлĕ уткалать,
Лăппи-лаппи пускалать,
Тăлт сикет те талт сикет,
Çунатне лăс-лăс силлет:

— Крак! Крак! Крак! Крак!
Пухайман çăмартине
    Эп пухатăп,
Тислĕкри кăпшанкине
    Эп тупатăп.
Йăмра тăрри йăвара
    Пурăнатăп,
Сивĕре те ăшăра
    Ыр куратăп.—

Ырламарĕ пукане
Курак тусăн пурнăçне:
— Кай, ташшу йĕркеллĕ мар,
Апату тирпейллĕ мар.
Мĕн ырри пур тислĕкре?—
Варалать çеç тумтире.



Хăрататăн сассупа,—
Çук, пымастăп эп санпа...—
Утрĕ, утрĕ пукане,—
Вăхăт кайрĕ каç енне.
Çерçие тĕлех пулать,
Çерçи тус çапла калать:
— Çиçтепи тус, ăçталла
Çул тытатăн каплалла?—
Пӳрнеске пек пукане
Хуравлать ак хайхине:
— Ӳкрĕм юлтăм лав çинчен.
Кăшкăрсан та темĕнччен,
Илтеймерĕç сассăма,
Пĕлейместĕп ним тума...
— Ан кулян-ха, пукане,—
Тет çерçи хай пикене.—
Эс, эппин, качча тухсам,
Каччă терĕш хам пулам.
— Еплерех ташлан, юрлан?
Мĕн çиен, ăçта пурнан?—
Тет пике хай йĕкĕте.
Леш, анса, яка çĕрте
Тĕкки-текки! сиккелет,
Çунатне çĕклекелет:
— Чим, чим! Чим, чим!
Арпари тул пĕрчине
　　Эп пухатăп,
Тупайман кăпшанкине
　　Эп тупатăп.
Çурт çунатти йăвара
　　Пурăнатăп,
Сивĕре те ăшăра
　　Ыр куратăп.—
Ырламарĕ пукане
Çерçи тусăн пурнăçне:
— Кай, ташшу йĕркеллĕ мар,

Апату тирпейлӗ мар.
Мӗн ырри пур арпара?—
Вараланӗ ал-ура.
Илӗртместӗн сассупа,—
Ҫук, пымастӑп эп санпа...—



Утрӗ, утрӗ пукане,
Ӗнтрӗк ҫапрӗ ҫӗр ҫине.
Хӑй килне ҫитесшӗн-ши
Васкаса килет шӑши.
— Ҫиҫтепи тус, ӑҫталла
Ҫул тытан,—тет,—каплалла?—
Пӳрнеске пек пукане
Хуравлать ак хайхине:
— Ӳкрӗм юлтӑм лав ҫинчен.
Кӑшкӑрсан та темӗнччен,
Илтеймерӗҫ сассӑма,
Пӗлеймерӗҫ ним тума.
— Ан кулян-ха, пукане,—
Тет шӑши хай пикене.—
Эс, эппин, качча тухсам,
Каччӑ терӗш хам пулам.
— Еплерех ташлан, юрлан?
Мӗн ҫиен, ӑҫта пурнан?—
Тет пике хай йӗкӗте.
Леш вара яка ҫӗрте
Ухӑнать те авӑнать,
Йӑкӑр-йӑкӑр ҫаврӑнать:
— Чи-чи, чи-чи!
Пуҫламан шур ҫӑкӑрне
Хам пуҫлатӑп,
Пуҫламан пыл чӗресне
Хам пуҫлатӑп.
Кӗлетре—тӳлек ҫуртра
Пурӑнатӑп,
Сивӗре те ӑшӑра
Ыр куратӑп.—

23048-ЧJВ

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО



Килĕштерчĕ пукане
Шăши тусăн пурнăçне:
— Ай-вай чаплă, пит чипер,
Шăп та шай эп кĕтнĕскер!
Хум çĕкленнĕн уткалан,
Хулă пек авкаланан,
Çемçетет сассу чуна,—
Ытарма та çук сана.—
Шăнкăр-шăнкăр пукане
Утрĕ шăши кил-çуртне...
Туй пуçларĕ ак шăши,
Янăрать юрри-ташши.
Ĕçмелли те çимелли
Сарлака сĕтел тулли.
Килнĕ упа-утаман,
Çитнĕ кашкăр-кашаман,
Пакшапала тилĕ тус,
Каюрапа шăши-юс,
Куянпа йĕкехӳре,—
Пурте халĕ ĕçкĕре.
Сăрапа хĕрсе çитсен,
Юрласси килет кусен.
Карталанчĕç хăнасем,
Янратаççĕ утнăçем:
— Ай-хай кинĕм пукане
Ӳснĕ шăллăм телейне:
Сар чечек пек сарăскер,
Ик çӳç хĕрри кăтраскер...—
Çĕнĕ мăшăр тав тăвать—
Пур енне те пуç таять.
Пăнтăр-пăнтăр, пăн та пан!
Параппан çапать куян.
Тилĕ тытрĕ кĕслине,
Пăнтлаттарать хĕлĕхне.
Виç пĕрмеллĕ купăспа
Нăрт та нарт тăвать упа.
Йăлт та ялт сикет пакша,
Тӳсеймест—тухать ташша.
Ыттисен те ал-ура
Тĕк тăмасть ăна кура.
Йăпăр-йăпăр чупакан,
Йăкăр-йăкăр утакан,
Тĕнкки-тенкки сикекен,
Тĕпĕртетсе илекен,
Лăппи-лаппи утакан,
Йăппи-яппи пусакан—
Пурте тухрĕç ташлама,
Çĕн мăшăра чыслама.
Такмаклаççĕ такмакне,
Çунтараççĕ сăмахне:
— Туя туй пек тăвар-и?
Юрлар-и те ташлар-и?
Туйĕ пултăр туй пекех,
Пурнăç пултăр пыл пекех.
Пултаратпăр пулмалла,
Култаратпăр пулмалла!
Пултарас çук—тухас çук,
Ура ярса пусас çук!..—
Хăнасен ташши пĕтсен,
Тахăш сĕнчĕ вĕсенчен:
— Ташлаттарар çĕн кине!
Вырăн парăр пикене!—
Такмаклаççĕ пĕрисем,
Ал çупаççĕ теприсем.
Çиçтепи ташша тухать,
Вĕттĕн-вĕттĕн хăй пусать,
Йăкăш-йăкăш тукалать,
Ик аллине сулкалать;
Пĕр ыткăнать малалла,
Пĕр ыткăнать каялла;
Чарăнса та илкелет,
Çаврăнса та илкелет.

Шăнкăр-шăнкăр—тенкисем,
Шăкăрт-шăкăрт—пушмаксем.
Тĕлĕнеççĕ хăнисем:
Çиçтепи, ташланăçем,
Каçăртса пырать пуçне,
Вăл курмасть умĕнчине—
Чӳлмекри сар сăрине
Тăкрĕ ячĕ урайне.
Сăрипе, кăпăкĕпе
Вараланчĕ шур кĕпе.
Хай пике тухать чупать,
Тасалмашкăн шыв тупать:
Шывĕ, ав, лупашкара,
Лачака-мĕн ун тавра.
Шыв енне пусать кăна—
Хай путать лачакана:
Туртăнсан та тухаймасть,
Тухайма май тупаймасть.
Ăнсăртран иртет курак:
— Мĕн тăватăн эсĕ? Крак!—
Макăрас пек пукане
Йăлăнать ак хайхине:
— Путрăм лартăм—хăв куран,
Кăларсам лачакаран.
— Кăларма кăларăттăм,
Эпĕ алă парăттăм—
Ман тирпейсĕр тумпала
Вараланăн çеç апла...—
Тет курак ăна çӳлтен,
Малаллаваскать пĕччен.
Ак çерçи килет вĕçсе:
— Мĕн тăватăн эс?—тесе.
Макăрас пек пукане
Йăлăнать ак хайхине:
— Путрăм лартăм—хăв куран,
Кăларсам лачакаран.
— Кăларма кăларăттăм,
Эпĕ алă парăттăм—
Ман тирпейсĕр тумпала
Вараланăн çеç апла,—
Тет çерçи ăна çӳлтен,
Малалла васкать пĕччен.
Аптăранă пукане
Кăшкăрать туй халăхне:
— Пулăшăр-ха, тусăмсем!
Путатăп-çке путнăçем!..
Илтеймерĕç нихăш те,
Килеймерĕç нихăш те.
Çиçтепи куçран çĕтет,
Хай юмахĕ те пĕтет.






Пĕчĕк туратна памăн-ши мана? . 2
Кайăксем мĕншĕн тĕрлĕ тĕслĕ . 3
Çăлтăрсен вăййи . . . . . . 4
Кăчăрми . . . . . . . . 5
Пакша . . . . . . . . 6
Уйăхпи валли . . . . . . . 7
Кулăшла йăран . . . . . . 8
Ярăнтарăттăм сире . . . . . 9
Улăп евĕрлĕ пуласчĕ . . . . 10
Керменкке . . . . . . . . 11
Çиçтепи (юмах) . . . . . . 14

*Для младшего школьного возраста*

**Геннадий Федорович Юмарт**
**(Трофимов)**

**ТЕРЕМОК**

**Стихи и сказки**

На чувашском языке

Редактор *Г. Г. Чаржов*
Художник *М. А. Ильин*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *Г. С. Самсонова*
Корректор *А. К. Шашкина*

Сдано в набор 14/V-1979 г. Подписано к печати 14/XII-1979 г.
Формат 84×108/16. Бумага офсетная № 2.
Гарнитура литературная. Печать офсетная.
Физ. печ. л. 1,25. Усл. печ. л. 2,10. Уч.-изд. л. 2,03.
Заказ 3041. Тираж 10 000 экз.
Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1
Управления по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли Совета Министров
Чувашской АССР,
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.